ХЫПАР

Чăваш ачисен хаçачĕ

# Тантăш

Хакĕ ирĕклĕ
Индексĕ: 54802



1931 çулхи кăрлачăн (январĕн)
12-мĕшĕнче тухма тытăннă

6+

3 (4520) №, 2017, кăрлач (январь), 26



**ШУПАШКАР АЧИ МУЛЬТФИЛЬМРА КАЛАÇНĂ**

*4-мĕш гимназире вĕренекен Александр Кочергин – "Лего Фильм: Бэтмен" геройĕсенчен пĕри*

3 стр.



**ÇĔНĔ КĔНЕКЕ**

*Александр Мяснико-вăн "Ту леш енче çил макăрать" кĕнеке вулакан аллинчен каймастех*

5 стр.



**ВĂРÇĂ АХРĂМĔ**

*Тир-сăран, çăкăр тĕпренчĕкĕ блокада ачисене вилĕмрен çăлса хăварнă*

6 стр.

# Куракан чăваш юррине чăннипех те кăмăллать



Кашни ача ашшĕ-амăшне курса çитĕнет, чылай чухне çывăх çыннисен кăсăкланăвĕ, ăсталăхĕ тĕпренчĕкне куçать. «Улми йывăççинчен аякка ӳкмест», – тесе ахальтен каламан-çке.

2 стр.

➲➲➲ Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр.

# Куракан чăваш юррине чĕннипех те кăмăллать



Шупашкарти 49-мĕш шкулта вĕренекен София Ермолаева пирки те çакнах калас килет. Мĕншĕн тетĕр-и? Вăл питĕ илемлĕ юрлать, ташлать, сцена çинче хăйне килĕшӳллĕ тытма пĕлет тата… уттисене яланах хаваслă кăмăл-туйăм парнелет. Çак енсем хĕрачана ашшĕнчен пĕтĕмпех куçнă. Чăваш эстрада артисчĕ Петр Ермолаев сцена çине тухсан куракансем пĕр вырăнта лараймаççĕ, хăйĕн хаваслăхĕпе вăл кашнинех «чĕртет». София та ун пекех – тантăшĕсем те, вĕрентекенсем те çакна çирĕплетеççĕ. «Класри мероприятие вăл яланах йĕркелеме пултарать, уттисене унта хутшăнма хавхалантарать. Ташăра интереслĕ хусканусем шухăшласа кăларать. Пултарулăха кăна мар, ăслăлăх конференцийĕсенче, предмет олимпиадисенче хастар София. Шкула килнĕ хăнасене те вăл пултарулăхĕпе тĕлĕнтерет», – мухтать хĕрачана Людмила Викторовна Никифорова класс ертӳçи. Хĕр пĕрчи ĕçченлĕхĕпе тата тăрăшулăхĕпе палăрать. Иксĕлми таланчĕпе конкурссемпе фестивальсенче куракана тыткăнлать. Республикăра кăна мар, çĕршывра иртекен тупăшусене те хутшăнмасăр юлмасть вăл. Иртнĕ çул вĕçĕнче София Пĕтĕм Раççейри тăван чĕлхе, çав шутра вырăс чĕлхи вĕрентекенсен ăсталăх класĕнчи «Юрă ăсталăхĕ» номинацире 2-мĕш вырăна тухрĕ. Эппин, тĕплĕнрех паллашар-ха хастарскерпе.

**– София, хăçан юрлама пуçланă эсĕ?**

– Икĕ çулта чухнех юрă-кĕвĕ тĕнчипе туслашрăм. Шкула çӳреме пуçласан ăсталăха аталантарма хальхи юрăсен «Сингл» студие çул тытрăм. 6 çул ытла ĕнтĕ Вероника Ивановна Арисова патĕнче вĕренетĕп.

**– Кунсăр пуçне тата мĕнпе интересленетĕн?**

– Ӳкерме юрататăп, уйрăмах пейзаж ăнăçлă пулать. Пĕр вăхăт ӳнер шкулне те çӳрерĕм. Юрăпа пĕрлех чун киленĕçне ташăра тупрăм – ăсталăха туптас тĕллевпе ача-пăча пултарулăхĕн центрĕнчи «Авангард» шоу-балета çӳреме пуçларăм.

**– Ташăпа кăсăкланасси мĕнрен пуçланчĕ?**

– Çемьепе «Авангард» шоу-балетăн концертĕнче пулнă хыççăн канăçа çухатрăм. Чуна тыткăнламалла ташлакан артистсем мана хавхалантарчĕç, çĕнĕ кăсăклану çуралчĕ. Хамăн та вĕсем пекех илемлĕ те килĕшӳллĕ тата маçтăрла ташлама вĕренес килчĕ.

**– Ташăра чи кăткăсси мĕн?**

– Малтанхи вăхăтра алă çинче тăма, шпагат ларма йывăртарахчĕ. Халĕ пур хусканăва та çăмăллăнах пурнăçлатăп.

**– Сцена çине тухса шăрантарнă пĕрремĕш юрра астăватăн-и?**

– Паллах. Пуçласа сцена çине «Анне» юрăпа тухрăм.

**– Халăх умĕнче хăвна мĕнле туятăн?**

– Куракансене юрăсемпе савăнтарни кăмăл-туйăма çĕклентерет. Вĕсем тăвăллăн алă çупни вара хавхалану парнелет.

**– Куракансен умĕнче хумханатăн-и?**

– Малтанхи самантра çеç, кайран иртсе каять.

**– Пĕтĕм Раççейри тăван чĕлхе, çав шутра вырăс чĕлхи вĕрентекенсен ăсталăх класĕпе ирттернĕ конкурс пирки мĕнле пĕлтĕн?**

– Анне каларĕ. Унта хутшăнма тӳрех килĕшрĕм!

**– Конкурс валли мĕнле юрă суйларăн?**

– Вероника Арисова ятарласа «Çăлтăрсем» çĕнĕ юрă çырчĕ.

**– Нумай хатĕрлентĕн-и?**

– Икĕ эрне.

**– Ăна çыртарса ярса памаллаччĕ-и?**

– Конкурс йĕркипе килĕшӳллĕн юрланине видеокамерăпа ӳкермеллеччĕ. Юрă сăмахĕсене субтитрпа вырăсла куçарса кăтартмаллаччĕ. Пĕтĕмпех хатĕрлесен видеоролика Мускава ăсатрăмăр.

**– Пĕтĕмлетĕве чылай вăхăт кĕтме тиврĕ-и?**

– Çук. Чи-чи пултаруллисене çынсем сасăласа суйларĕç. Ку нумай вăхăт йышăнмарĕ.

**– Эсĕ миçе сасă пухрăн?**

– Çичçĕре яхăн.

**– Тупăшакансем йышлăнччĕ-и?**

– Малтанхи тапхăрта нумайăнччĕ. Сасăлав хыççăн Мускава кайма тивĕçлĕ 20-е яхăн ача çеç юлчĕ.

**– Хăв сасăлав витĕр тухнине мĕнле пĕлтĕн?**

– Пĕр ырă кун, эпĕ «Сингл» студие кайма пуçтарăннă вăхăтра аннепе Злата йăмăкăм ташă студийĕнчен килчĕç. Юратнă çыннăм савăнăçлă хыпар пĕлтерчĕ: «София, эпир Мускава каятпăр!» – терĕ. Еплерех хĕпĕртерĕм! Мăччана çити сикме хатĕрччĕ. Ку маншăн – пĕлтерĕшлĕ çитĕнӳ-çке.

**– Мускава çитсен ăçталла çул тытрăр?**

– Тӳрех «чĕрĕ итлев» ирттерме палăртнă отеле кайрăмăр. Унта эпир, тупăшакансем, тӳресен умĕнче хамăр пултарулăха кăтартрăмăр.

**– Çĕнтерӳçĕсене мĕнпе савăнтарчĕç?**

– Диплом, интереслĕ кĕнеке тата фотоаппарат парнелерĕç.

**– Тата мĕнле конкурссем пĕлтерĕшлĕ пулчĕç саншăн?**

– Республикăри «Мехел» конкурс, ЮТВ телеканал ирттернĕ «Çулталăк юрри – 2015» проекта хутшăнни, «Шкул шăпчăкĕнче» гран-при çĕнсе илни…

**– Саншăн кам тĕслĕх?**

– Атте.

**– Малашнехи пурнăçна сценăпах çыхăнтарасшăн-и?**

– Çапла. Атте пекех паллă артист пулас ĕмĕтпе çунатланатăп.

**– Тĕллевсене пурнăçлас тесен мĕн тумалла?**

– Пĕтĕм вăйран тăрăшмалла. Унсăрăн ăнăçу санран пăрăнĕ. Тата шкулта лайăх вĕренмелле.

**– «Тантăш» тусĕсене мĕн сунатăн?**

– Йывăрлăха ан парăнăр. Тăрăшсан пĕтĕмпех пурнăçланĕ.

*Нина ЦАРЫГИНА.*


Тантăш
чăваш ачисен хаçачĕ

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

● ХАÇАТ ИНДЕКСĔ:
54802 - (çур çула) – Чăваш Республикинче

● Редакципе издатель адресĕ:
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "Хыпар" Издательство çурчĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă. "Чувашия" ИПК" АО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРĔ:
Тел.: 64-24-01

● ДИРЕКТОР - ТĔП РЕДАКТОР тивĕçĕсене пурнăçлакан Д.А.МОИСЕЕВ

● ТЕЛЕФОНСЕМ

| | |
|---|---|
| директор-тĕп редактор: | 56-00-67 |
| редактор, çырусемпе тата юнкорсемпе ĕçлекен пай: | 28-83-86 |
| шкул ачисен пайĕ: | 28-85-69 |
| спорт тата экологи пайĕ: | 56-11-80 |
| право, кăмăл-сипет пайĕ: | 28-83-89 |
| факс: | (8352) 28-83-70 |
| бухгалтери: | 28-83-64 |

● РЕДАКТОР В.ФЕДОРОВ

● НОМЕР ВУЛАВÇИ Н.ЦАРЫГИНА

● КАЛĂПЛАВÇĂ Н.ПЕТРОВА

● ЭЛЕКТРОН АДРЕС:
e-mail: tantas@list.ru

● ПИРĔН САЙТ:
www.hypar.ru

● ТИРАЖ
1243 экз.

● ЗАКАЗ № 225
Пичете кăрлач уйăхĕн 25-мĕшĕнче алă пуснă.

4 627126 799906

Газета «Тантăш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

Ⓟ паллăпа реклама материалĕсене палăртнă

Пичете графикпа 15 сехетре алă пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алă пуснă.




# Чĕвĕлтетсе апатланни чуна савăнтарать



Хĕлле кайăксене пĕрре те çăмăл маррине лайăх пĕлетпĕр. Вĕсен мĕн кĕркуннерен пуçласа çуркунне çитиччен ирĕн-каçăн тăм ўкнине те, хўтлĕхпе апат çитменнине те чăтса ирттерме тивет. Йывăр вăхăт вара – нарăс уйăхĕ. Вăйлă çилпе, тăманпа, сивĕсемпе «пуян» вăл. Çунатлă тусăмсене вара эпир пулăшма яланах хатĕр.

Пирĕн шкулта «Звездочки» Тимур команди йĕркеленĕ. Унăн хастарĕсем кайăксем валли сырăшсем туса çакрĕç. Богдан Андреев, Диана Александрова, Анастасия Ефремова, Анастасия Матвеева, Агния Егорова, Артур Кудряшов, Маргарита Петрова, Анжелика Андреева, Эльвира Егорова, Сильвия Максимова ăсталанă «столовăйсене» вĕçен кайăксем питех те кăмăллани сисĕнчĕ. Унта хурса панă тырă пĕрчисене, апат-çимĕçе хаваспах çиеççĕ. Пархатарлă ĕçе хутшăннă ачасене тав тунăн чĕвĕлтетсе пĕр-пĕринпе калаçаççĕ тейĕн.

***Н.ФИЛИППОВА,***
***класс ертўçи тата аслă вожатăй.***

**АВТОР СĂНЎКЕРЧĔКĔНЧЕ:** «столовăйсем» хатĕр.

Красноармейски районĕ,
Чатукасси шкулĕ.

# «Сăпка юрри» шăрантарчĕç, «Улахра» та пулчĕç

Тĕнче литературинче сумлă ят хăварнă чăваш халăх поэчĕ Петр Петрович Хусанкай çуралнăранпа 110 çул çитрĕ.

Çак юбилее халалласа пирĕн шкулта «Петĕр Хусанкай – чăваш поэзийĕн Улăпĕ» литературăпа музыка композицийĕ иртрĕ. Уявра вунпĕрмĕш класра вĕренекенсем Петĕр Хусанкайăн пурнăçĕпе, пултарулăхĕпе паллаштарчĕç. Иван Майоров, Илья Шибаев, Анатолий Пыркин, Илемпи Александрова, Любовь Семенова поэтăн сăввисене уйрăмах ăста та пултаруллă вуларĕç. 6-мĕш класра вĕренекен Карина Осипова поэт ывăлне Атнере халалласа çырнă «Сăпка юрри» сăввипе кĕвĕленĕ юрра шăрантарчĕ. Çавăн пекех çак класс ачисем уява пуçтарăннисене «Тăван çĕршыв» юрă парнелерĕç. Куракансене 10-11-мĕш классенче вĕренекенсем лартнă «Улахра» сценка кăмăла кайрĕ.

Юлашкинчен вĕренекенсем «Сиктĕрме çăлкуçĕ» видеофильм пăхрĕç. Уяв савăнăçлă иртрĕ.

***Илья ШИБАЕВ,***
***9-мĕш класс вĕренекенĕ.***

Йĕпреç районĕ,
Пучинке шкулĕ.

# Эх, тăвайкки-тăвайкки...

Шупашкарпа паллашма районсенчен килекен шкул ачисем тĕрлĕ çĕрте экскурсире пулаççĕ. Çу кунĕсенче хăнасене хула варринчи «тинĕс» илĕртет. Ачасем кимĕпе ярăнаççĕ, фонтансен илемĕпе киленеççĕ, вĕтĕ-вĕтĕ хумсем çинче ишекен акăшсене курса савăнаççĕ. Хĕл кунĕсенче те савăнăç парнелет тăван Шупашкар. Нумай паркри тĕрлĕ тĕлĕнтермĕш тыткăна илет ялтан килнĕскерсене.



Хĕллехи каникулта çеç мар, кану кунĕсенче те ача-пăчан хаваслă сассипе тулать «Лакрей вăрманĕ» парк. Асамлă çутăсемпе йăлтăртатакан кану вырăнĕ «Щелкунчик» юмаха аса илтерет. Мĕн тери илемлĕ кунта!

«Юмах катокĕ» килĕшет пулсан, тархасшăн, конькипе ярăн, хĕл сиввине пăхмасăр чун каниччен савăн. Йĕлтĕр çине тăрса çилпе ăмăртма та ан ўркен, аслисем пулăшнипе тарăн кĕртсене снегоходпа парăнтарма пултаратăн.

Сăрт çинчен «банана» вырнаçса лар та вăшлатса кăна ан. Темĕнле аттракцион та илĕртет ачасене. Ял ачисем вара уйрăмах «Дракоша», «Автодром» ятлисене кăмăлланăранах вĕсен патĕнчен татăлма пĕлмеççĕ.

Парк пурне те хавас. Эсир те вăхăт тупса кунта çитсе курма пултаратăр.

**СĂНЎКЕРЧĔКРЕ:** Çемьепе – коньки çинче.




# Шупашкар ачи мультфильмра калаçнă

**Александр Кочергин Шупашкарти 4-мĕш гимназире çиччĕмĕш класра вĕренет. Вăл вĕренўри çитĕнўсемпе кăна мар, пултарулăхра та хăйне тивĕçлипе кăтартма пултарчĕ.**

Арçын ача «Лего Фильм: Бэтмен» Данипе Америка мультфильмри пĕр персонаж сассипе калаçса палăрнă. Мультфильма нарăс уйăхĕн тăххăрмĕшĕнче Раççей кинотеатрĕсенче кăтартма тытăнаççĕ.

Мĕнле майпа чăваш ачи мультфильмри герой сассипе калаçма тивĕç пулнă-ха? Иртнĕ çулти раштавра пĕр паллă сутуилў компанийĕн лавккисем «Когда Бэтмен – твой лучший друг» видеороликсен конкурсне йĕркеленĕ пулнă. Саша хăй шухăшласа тупнă тата хăех йĕркелесе хатĕрленĕ видео чи лайăх виçĕ ĕçрен пĕри пулса тăнă. Гимназире вĕренекен арçын ачана хĕллехи каникул кунĕсенче «Мосфильм» киноконцернăн сасă çыртаракан студие чĕнсе илнĕ.



«Кино ўкерес ĕçе хутшăнма тивĕç пуласси пирки нихăçан та ĕмĕтленмен! – тет арçын ача. – Хам кăмăллакан персонаж сассипе пĕр сехете яхăн калаçма тўр килчĕ. Унăн ятне хальлĕхе каламастăп, мĕншĕн тесен фильма кăтартма тытăнман-ха. Картинкăсем экрансем çине тухнă май текста эпĕ хут çинчен вуласа пытăм».

Çамрăк артистсен тўрех ĕç-пуç кал-кал пыманран вĕсене студире тăрăшакансем нумай пулăшнă. Киану Ривз, Брэд Питт, Том Круз сассисемпе «калаçакан» паллă актер тата режиссер Всеволод Кузнецов Шупашкар ачине нумай сĕнўпе хавхалантарнă. Микрофонпа епле усă курмаллине вĕрентнĕ, дубляжпа ĕçлекен актерсен хусканăвĕсене хăнăхтарнă.

Студире самаях тар тăкса ĕшеннĕ хыççăн çамрăк артист «Мосфильм» киноконцернпа паллашнă. Ăна уйрăмах «Белый тигр» фильмра ўкернĕ танк макечĕсем килĕшнĕ.

Арçын ача пуласлăхра актер профессине суйласа илĕ-ши? Кун пирки вăл хальлĕхе нимех те хуравлаймасть. Ăна паян мотокросс ытларах илĕртет.

**СĂНЎКЕРЧĔКРЕ:** студире.

## Ял çамрăксене кĕтет

**Ял ан пушантăр, уй-хир тыр-пулпа кашлатăр, фермăсем выльăх-чĕрлĕхпе тулли пулччăр тесен çамрăксен тăван ене юлмаллах.**

Çак тĕллевпех Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕ тĕллевлĕн ĕçлет, çамрăксене вĕренме йыхравлать, пулас професие суйласа илме майсем туса парать. Чылай шкулта агроклассем ĕçлеме те тытăнчĕç ĕнтĕ.



Çак кунсенче Çĕрпў районĕнчи Опытнăй шкулĕнче академи преподавателĕсем хушма пĕлў илме ĕмĕтленекен çамрăксемпе занятисем ирттерчĕç. Ахальтен мар ĕнтĕ Чурачăк шкулĕнчи Таня Иванова, Опытнăй шкулĕн-чи Егор Михайлов, Саша Игнатьев агрокласра пĕлў илме тытăннишĕн тем пекех савăнаççĕ.

Чылай ачан ашшĕ-амăшĕ хăйĕн профессине ял хуçалăхĕпе çыхăнтарнă. Ачисем те вĕсен çул-йĕрĕпе кайма тĕв тытнăран, тăван тăрăха юратнăран, мĕн пĕчĕкрен çĕр ĕçне кăмăлланăран академие вĕренме каймашкăн шухăш тытнă. Çавна пулах агрокласс занятийĕсене йĕркеллех çўреççĕ.

Çамрăксем çак тĕллевпе пурăнни савăнтарать. Апла тăк ял пуласлăхĕ пурах!

**СĂНЎКЕРЧĔКРЕ:** çамрăксем агрокласс урокĕнче.

Çыншăн çын хуйхăрмасть

**Тĕрлĕрен: вула та пĕл**

# Çĕнĕ шкул киввинчен пин хут лайăхрах

**Кунта ĕçлекенсен те, вĕренекенсен те пысăк савăнăç – кĕркунне вĕренӳ çулне çĕнĕ пĕлӳ çуртĕнче пуçланă вĕсем. Вăл аякранах илемлĕн курăнса ларать, ачасене кунсеренех хăй патне кăчăк туртать. Ара, кивĕ шкулпа танлаштарма та çук-çке ăна, хальхи пин хут лайăхрах.**



### Ачасен кăмăлне каять

– Пилĕк çул каялла 60-мĕш çулсенче хута янă кивĕ çурта юсама тĕллев тытрăмăр. Классемпе пӳлĕмсене сăн ӳкерсе район администрацине илсе кайрăмăр. Хыççăн – Шупашкара. Унта ку çуртра малалла вĕренме май çуккине палăртрĕç. Каярах республикăри Вĕренӳ министерствинче Хирти Явăшра çĕнĕ шкул хута яма проект йышăнчĕç. Ăна пурнăçа кĕртме тытăнтăмăр. Çĕнĕ вĕренӳ çулне çĕнĕ шкулта пуçларăмăр, – каласа пачĕ Николай Георгиевич Ильин директор.

Ачасен кăмăлне туллин тивĕçтерет çурт: кунта пысăк та çутă спортзал, хоккей вылямалли коробка, волейбол тата баскетбол площадкисем пур. Шкул автобусне лартмашкăн гараж та хăпартнă. Кивĕ шкулта вара спортзал та пулман, физкультура урокĕсем чылай чухне урамра иртнĕ. Халь кашни ача тулли кăмăлпа кунта килет, уроксем вĕçленсен хаваслă кăмăлпа киле таврăнать.

### Дильназпа Валерия юратаççĕ чăваш ташшине

Тулли кăмăлпа вĕренме çӳрекен арçын ачасемпе хĕрачасен çитĕнӳсем тăвас, шкул ятне çӳлте тытас туртăмне кăçалхи савăнăçлă пулăм тата ытларах вăйлатнă. Пултаруллăскерсем тĕрлĕ çĕрте палăрма ăнтăлаççĕ.

Чăвашсемпе тутарсем пĕр парта хушшинче лараççĕ, пĕрле выляççĕ, савăнаççĕ. Туслăх хуçаланать кунта. 6-мĕш класри вĕренӳ отличникĕсем – Дильназ Тазетдиновăпа Валерия Иванова – çакна çирĕплетрĕç те.

– Эпир пĕр çултах, пĕр кунрах, пĕр больницăрах кун çути курнă, – хĕпĕртесе пĕлтерчĕç юлташсем.

Вĕсем пур çĕрте те пĕрле пулнинчен тĕлĕнме пăрахнă та ĕнтĕ иттисем. Сăн-сăпачĕпе те пĕр пекрех. Аппăшĕне йăмăкĕ тейĕн. Ахăртнех, вĕсене пĕрпĕринпе тĕл пулма шăпа пӳрнĕ.

– Чылай тус-юлташ пуличчен пĕри, шанчăкли, пултăр, – теççĕ хĕрачасем.

Дильназ тутар çемйинче çитĕнет, чăваш чĕлхи уншăн иккĕмĕш тăван чĕлхе вырăнĕнчех. Чăвашла вăл ача садĕнчех пуплеме вĕреннĕ, çăмăллăнах ăса хывнă ăна. Халĕ тантăшĕсемпе те шакăртаттарса калаçать. Валерия та тусĕнчен юлмасть – майĕпен тутар чĕлхине вĕренсе пырать. «Çичĕ чĕлхе – çичĕ ăс» тенине яланах асра тытаççĕ тăрăшуллăскерсем.

Хĕрачасем чылай çĕрте çитĕнӳ тума ăнтăлаççĕ. Çак тĕллевпех шкулти ташă кружокне çул тытнăскерсем ăсталăхне самаях ӳстерме ĕлкĕрнĕ. Шкулти пĕр концерт-мероприяти те вĕсемсĕр иртмест. Чи кăмăла каякан ташă пирки ыйтсан «Морячка» тата чăваш ташшисене палăртрĕç. Дильназ: «Чăваш ташшине питĕ кăмăллатăп, мĕншĕн тесен унта хусканăвĕсем те интереслĕ, тумтирĕ те хитре», – терĕ йăл кулса.

Çамрăк ташăçăсем районти тата республикăри пултарулăх конкурс-фестивале тăтăшах хутшăнса палăраççĕ. Хисеп хучĕсем те нумай çĕнсе илнĕ. Кунсăр пуçне туссем «Асамлă квиллинг» тата математика кружокĕсенче тавракурăма аталантараççĕ.

Пултаруллăскерсем спортпа та туслă. Хĕл кунĕсенче йĕлтĕрпе чупаççĕ, шкулти каткокра конькипе ăмăртмалла ярăнаççĕ. Шкулти волейбол командинче те хастар. Физкультура урокĕсенче чăтăмсăррăн кĕтекенскерсем хаваслăн выляса-кулса сывлăха çирĕплетеççĕ. Урок çĕнĕ, çутă, пысăк спортзалта иртни вара вĕсене тата ытларах хавхалантарать.

Малашне те хастарсене çитĕнӳсем тума, виççĕмĕш чĕрĕке кăна мар, пĕтĕм вĕренӳ çулне «пиллĕк» паллăпа çеç вĕçлеме ырă сунатпăр.

*Нина ЦАРЫГИНА.*

Комсомольски районĕ,
Хирти Явăш шкулĕ.
**АВТОР сăнӳкерчĕкĕ.**

# Мороженăй хатĕрлессинчен тытăнса...

Пуçламăш классем çулсеренех ăслăлăх конференцине хастар хутшăнаççĕ. Ачасем хăйсене мĕн кăсăклантарни, хумхантарни, канăçсăрлантарни пирки çулталăк тăршшĕпех тĕпчесе хатĕрлеççĕ.

Нумай пулмасть çакăн йышши черетлĕ мероприяти иртрĕ. Кашни класс хăйсемпе пĕр ӳсĕмрипе тупăшрĕ. Тăваттăмĕшĕнче вĕренекенсем ăстăпе, анлă тавракурăмĕпе, илемлĕ те яка чĕлхипе чăнах та тĕлĕнтерчĕç тӳресене. Тĕрлĕ тема янăрарĕ кунта: мороженăй епле хатĕрлессинчен пуçласа хамăр шкул вырнаçнă Мускав районĕнчи сывлăша еплерех тасатасси таранах. Çамрăк авторсем хăйсен сăввисене те вуларĕç, хăйсем лартса çитĕнтернĕ ӳсен-тăрана кăтартрĕç, чăваш юррисене шăрантарчĕç…

Тӳресем кашни ачана тĕрлĕ ыйтупа тĕрĕслерĕç. Пурин тăрăшулăхне те çӳллĕ шайра хакларĕç вĕсем.

*Ольга РУБЦОВА.*

Шупашкар,
2-мĕш шкул

## ĂШĂ САЛАМСЕМ

*СМС саламсене пĕлтермелли номер:* 89051975911

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Турханкассинче çуралнă, халĕ Сĕнтĕрвăрринче ĕçлесе пурăнакан **Надежда Семеновна КОЛЕСНИКОВĂНА** 50 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн саламлатпăр, вăрăм ĕмĕр, çирĕп сывлăх, тулли телей сунатпăр. Санăн питӳнтен йăл кулă нихăçан та ан çухалтăр, сарă хĕвел пек ăшă кăмăлу пурне те савăнтартăр, ĕçченлĕхӳпе тăрăшулăху иксĕлми пулччăр.

Сана эпир яланах хисепленĕ, малашне те çаплăх пулĕ. Юрататпăр.

*Амăшĕ, ывăлĕ, пиччĕшĕсемпе аппăшĕ, йăмăкĕ.*

✦ ✦ ✦

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Атнарта çуралса ӳснĕ, халĕ Шупашкарта электрик пулса ĕçлекен хресна ывăлăма черетлĕ çуралнă кунĕпе саламлатăп. Çирĕп сывлăх, такăр çул, телейпе ăнăçу сунатăп.

*Хреснамăшĕ.*

Элĕк районĕ.

✦ ✦ ✦

Етĕрне районĕнчи Тури Мучар ялĕнче пурăнакан иккĕмĕш сыпăкри аппана **Зоя Андреевна ФЕДОТОВĂНА** 82 çул тултарнă ятпа чĕререн саламлатпăр. Сурпан пек вăрăм кун-çул, хурçă пек çирĕп сывлăх, телейлĕ ватлăх, кунсерен ăнăçу сунатпăр.

*Етĕрне тата Элĕк районĕсенчи тăванĕсем.*

✦ ✦ ✦

Элĕк районĕнчи Мăн Карачура ялĕнче çуралса ӳснĕ, халĕ Шупашкарти "Промтракторта" ĕçлекен **Александр Анатольевич КСЕНОФОНТОВА** çитес 51 çулхи çуралнă кунĕпе ăшшăн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, ăшă кăмăллă чиперукпа çывăх вăхăтра çемье çавăрма ăнăçу тата телей сунатпăр.

*Ял-йыш.*

✦ ✦ ✦

Элĕк районĕнчи Куракăш ялĕнче пурăнакан, пур ĕçре те вăр-вар, ăшă кăмăллă, сăпайлă Августина **Станиславовна СЕМЕНОВА /ДАВЫДОВА/** кăрлачăн 31-мĕшĕнче 60 çул тултарать. Ăна эпир чĕререн саламлатпăр. Ырлăх-сывлăх, юрату, тулли телей сунатпăр.

*Тăванĕсем, ял-йыш.*

✦ ✦ ✦

Элĕкри больницăра ĕçлекен тăрăшуллă медсестрана **Вера Васильевна ПОРФИРЬЕВĂНА /ЧЕРНОВĂНА/** пĕтĕм кăмăлтан черетлĕ çуралнă кунĕпе саламлатпăр. Телейӳ юнашарах çӳретăр. Çемьере яланах килĕшӳпе тату хуçалантăр. Сывлăху кунсерен савăнтартăр.

*Элĕк районĕнчи пациентсем.*

✦ ✦ ✦

Элĕкри больницăра ĕçлекен медсестрана, **Татьяна Анатольевна ИВАНОВĂНА** 56 çул тултарнă ятпа саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, сурпан пек вăрăм кун-çул, кашни утăмра иксĕлми телей, ăнăçупа ӳсĕмсем сунатпăр.

*Ырă-кăмăлĕпе паллашнă пациентсем.*

ÇĔНĔ КĔНЕКЕ

# Паттăрлăх çулĕ

**Кашни арçын ачан тивĕçĕ – çĕршыва юрăхлă тата кирек мĕнле кăткăс лару-тăрура та тăван çĕре хӳтĕлеме хатĕр салтак пуласси. Алла пăшал тытнипе, çар ыйтăвĕсене сӳтсе явнипе çеç килмест ку туйăм. Ăна мĕн пĕчĕкрен аталантармалла, чун çирĕплĕхне кунсерен ӳстермелле. Çакă малашлăхра çул уçса пырĕ, тĕллевсене пурнăçа кĕртме пулăшĕ.**




Канаш районĕнчи Ачча ялĕнче çуралса ӳснĕ Руслан Желудкин ачаранах мал ĕмĕтлĕхĕпе те пуçарулăхĕпе, ĕçченлĕхĕпе те хастарлăхĕпе палăрнă. Пограничник-офицер пулма шут тытнăскер шкулта лайăх вĕреннĕ, нумай вуланă, ятарлă литература тишкернĕ, йыттине те хĕсмете хатĕрлеме пуçланă. Тăван ялĕнчи шкултан ылтăн медальпе вĕренсе тухнă хыççăн вара Голицынăри чикĕ институтне çул тытнă. Чимĕр-ха, мĕнпур вăрттăнлăха уçса парам мар, чи пĕлтерĕшлине асăнам.

Нумай пулмасть Чăваш кĕнеке издательствинче 500 экземплярлă тиражпа Александр Мясниковăн «Ту леш енче çил макăрать» кĕнеки кун çути курчĕ. Ăна патшалăх чиккине хуралланă чух пуç хунă çĕршыв хӳтĕлевçисене халалланă. Калава чăвашла куçараканĕ – Елизавета Васильева, редакторĕ – Ольга Иванова, ӳнерçи – Мария Кузнецова.

Хайлаври тĕп сăнар – Руслан Желудкин пограничник. Вулакансем, тен, ун пирки илтнĕ те. Автор чăваш йĕкĕчĕн кун-çулне, паттăрлăхне кăсăклă çутатса парать. Акă пирĕн умра – пай пуçлăхĕн çумĕ, оперативлă шырав уйрăмĕн ертӳçи Желудкин подполковник. Ĕçпе кӳршĕ салана каймалла унăн. Яваплă çар çынни йывăрлăхсенчен хăрамасть, йăлт хăй татса парасшăн. «Чикĕ институтĕнчен тин килнĕ çамрăксене упрар. Ан тив, хальлĕхе кунти лару-тăрăва хăнăхчăр, служба тути-масине ăнланса илччĕр», – тет вăл. Офицер пурнăç хакне ăнланни, ырă кăмăллăха мала хуни сисĕнет çак сăмахсенче.

Амăшĕпе ывăлĕн ăшă калаçăвĕнче те туйăнать Русланăн вашаватлăхĕ. Тăванĕсене юратать, хисеплет яш. Тăван тăрăхран аякра пулин те, чунĕпе çывăх çынсемпе юнашар вăл.

Александр Германович Желудкин пограничникăн сăнарне тĕрлĕ енлĕн уçса парать, вулакана хăйĕнпе пĕрле интереслĕ çулçӳреве тухма хистет. Тин кăна сăртлă-туллă вырăнтаччĕ эпир. Тепĕр самантран чăваш ялне ертсе каять çыравçă. Руслан – пĕчĕк арçын ача. Вăл мĕншĕн пограничник пулма шут тытнине ăнланатпăр.

Акă Руслан Желудкин – тăрăшуллă вĕренекен, кăштахран – чикĕ институчĕн курсанчĕ. Вĕренӳ тапхăрĕ çав тери хавасла иртет. Кулăшла самантсем кулленхи йывăрлăхсене парăнтарма, çар дисциплинисене ăша хывма пулăшаççĕ.

Кунсем иртеççĕ, Руслан Çурçĕр Кавказра ĕнтĕ. Пĕрремĕш тĕрĕслевсем, кăткăс ĕçсем, яваплăх ӳсни... Вулакана каллех хальхи вăхăта таврать автор. Тĕп геройăн тĕлĕкĕ сисчĕвлентерет, инкек пуласси çинчен систерет. «Хăрушлăх сирĕлтĕрччĕ, геройсем çăлăнччăр...» – тетĕн. Анчах ку калаври сăнарсем – Руслан Желудкин подполковникпа Магомед Гасангосейнов прапорщик – пирĕн самана çыннисем, Тăван çĕршывăн паттăр та мухтавлă ывăлĕсем. Вĕсен историйĕ хурлăхлă. Çар çыннисем, вилĕмпе куçа-куçăн тăнăскерсем, никама та сутман. «Шанса панă ĕçне тивĕçлипех пурнăçланă, ыттисен кун-çулĕ лăпкă, тăнăç иртĕр тесе хăйсене шеллемен». Иккĕшне те вилнĕ хыççăн Хăюлăх орденĕпе наградăланă.

Кĕнеке çавăн пекех чикĕ хуралçисен çăмăл мар служби çинчен каласа парать. Шатăр сивĕпе чăтма çук шăрăхра, лӳшкесе çăвакан çумăрпа асар-писер çил-тăманра, ир те, каç та пограничниксем хăйсен тивĕçне чунпа парăнса пурнăçлаççĕ.

Кăларăм хушма информаципе пуян. Кунта Раççей Федерацийĕн федераллă хăрушсăрлăх службин чикĕ хĕсмечĕпе унăн эмблеми, Василий Иванович Чапаевпа хĕсмет йытти, «УАЗ-469» çăмăл автомобильпе «БМП-1» пехотăн çар машини тата Калашников автомачĕ çинчен вуласа пĕлме пулать. Раççей Федерацийĕ мĕнле пашталăхсемпе чикĕленнине ятарлă карттă çинче кăтартса панă. Çавăнпа арçын ачасемшĕн уйрăмах интереслĕ пулĕ Александр Мясниковăн кĕнеки. Эппин, унпа паллашма васкăр. Тăван çĕрĕн паттăрĕсем çинчен пĕлмеллех пирĕн.

*Ольга АВСТРИЙСКАЯ.*

САВĂНĂÇ

# Капăр теттесем курсан...




**Агния Барто ятне илтмен çын çуктăр. Паллă ача-пăча çыравçин сăввисене кĕçĕннисем те, çитĕннисем те юратса вулаççĕ. Ансат чĕлхепе çырнăскерсем тӳрех асра юлаççĕ. Куç умне чĕрĕ ӳкерчĕк тухса тăрать.**

Çак кунсенче Чăваш кĕнеке издательствинче Агния Бартон «Игрушки. Теттесем» кĕнеки /редакторĕ – В.Н. Алексеев, ӳнерçи – И.Е. Калентьева/ 1000 экземплярлă тиражпа вырăсла-чăвашла пичетленсе тухрĕ. Кăларăма кĕнĕ сăвăсене Николай Ыдарай ача-пăча çыравçи чăвашла куçарнă. Çепĕç те янăравлăскерсем çăмăллăн вуланаççĕ, вырăсла текстпа килĕшсе тăраççĕ. Сăмахран:

Мишка косолапый
По лесу идет,
Шишки собирает
И в карман кладет.

Вдруг упала шишка
Прямо Мишке в лоб.
Мишка рассердился,
И ногою – топ!

*/«Мишка»./*

Пĕчĕк упа Мишкă
Вăрманпа пырать,
Йĕкелсем тупать те
Кĕсйине хурать.

Пĕр йĕкелĕ ӳкрĕ
Ун çамки çине.
Мишка, ах, çилленчĕ,
Тапрĕ урипе!

*/«Упа»./*

Мĕнле шеллемĕн-ха Мишкăна? Çамка çине йĕкел ӳксен кирек кам та кăмăлсăрланĕ.

Кĕнеке страницисенче çавăн пекех тяппине суранлатнă упапа, хăма çулпа утакан вăкăрпа, харсăр парапланçăпа, çумăр айĕнче йĕпеннĕ мĕскĕн мулкачпа, мечĕк кӳлле ӳкнишĕн йĕрекен Таньăпа, ыйха путнă теттесемпе тĕл пулĕç вулакансем. Автор ачасен кăмăл-туйăмне пит аван ăнланать, вĕсене мĕн кăсăклантарнине пĕлет. Çавăнпа сăнарсем илĕртӳллĕ, шăпăрлансене çывăх. Вăр-вар та маттурскерсем пĕрре те тунсăхласа лармаççĕ, мĕнле те пулин интереслĕ вăйă часах шухăшласа кăлараççĕ. Е Пиçука грузовикпа ярăнтараççĕ /«Грузовик»/, е самолет ăсталаççĕ те вăрман урлă вирхĕнеççĕ /«Самолет»/, е качака путеккине уçăлма илсе тухаççĕ /«Качака путекки»/, е çырма хĕррипе карап сĕтĕреççĕ /«Карап»/...

Ирина Калентьевăн ӳкерчĕкĕсем тĕлĕнмелле сутă та ырă. Кĕнекене алăран ямасăр вулас, илемлĕ теттесемпе савăнăçлă ачасем çине куç илми пăхас килет. Кашни арçын ачапа хĕр пĕрчи патне çиттĕрччĕ ку кăларăм:

Капăр теттесем курсан
Вылямасăр кам тӳсĕ?
Çĕнĕ кĕнеке тухсан
Вуламасăр кам тӳсĕ?

*Ольга АВСТРИЙСКАЯ.*

ЫТАРЛĂН

*Варнава (САНИН) манах*

## Нăрăпа Лили

Кӳлĕ хĕрринче хӳхĕм Лили çитĕннĕ. Ăна чее Авăр курнă та темле пулсан та хăй майлă çавăрма шутланă. Ун чĕрине çĕнсе илме тĕрлĕ мел шухăшласа кăларнă.

– Лили, атя сана хамăн чăрсăр хумсем çинче ярăнтарам! Нихçан манăçми пулĕ ку! Лили, эсĕ çуллахи шăрăхпа халран кайнине куратăп вĕт-ха. Эпĕ сана кăмăллă уçăлăх парнелесшĕн.

Лилин пуçне çавăрсах янă Авăр.

Инçех мар пĕчĕк Нăрă пурăннă. Лили асăрхаман та ăна. Анчах Нăрă чечеке чун-чĕререн юратнă. Хайхискер Лили усал шухăшлă Авăра парăнма хатĕррине курнă та çапла каланă:

– Хаклă Лили, тархасшăн, ан кай ун хыççăн. Вăл сана тĕп тăвасшăн вĕт!

Анчах Лили ĕненмен ăна:

– Пĕчĕк Нăрă, мĕн юптаратăн-ши? Эс пăхсамччĕ, Авăр еплерех вăйлă, илемлĕ, асамлă... Ун сĕнĕвне хирĕçлеме пултараймастăп эпĕ.

– Çапла-и-ха? – тарăхса кайнă Нăрă. – Эсĕ ăна ĕненессĕн мĕн пулассине халех кăтартса парăп эппин...

Лилие юратакан харсăр Нăрă шыв çаврăнăшнех чăмнă. Тепĕр самантран вăл ĕмĕрлĕхех çухалнă. Чăн юрату мĕнне халь тин ăнланса илнĕ Лили.

*Вырăсларан*
*Ольга ИВАНОВА куçарнă.*

**ВĂРÇĂ АХРĂМĔ**

# Ах, кунĕсем сивĕ-çке, хырăмра – пушă




**Ленинград хулине фашист пусмăрĕнчен хăтарнăранпа январĕн 27-мĕшĕнче 73 çул çитет. Хăрушă вăрçă халăха хĕн-хур кăтартнă. Ачасемшĕн те йывăр кунсем пуçланнă. Урамра тусĕсемпе выляма юратаканскерсем аслисемпе тан йывăр ĕçе пуçăннă. Выçăпа асапланнă. Хĕл сивви пушшех вăйран янă вĕсене. Пÿлĕмсенче те кантăксем пăрпа хупланнă. Картлашка тăрăх çÿлелле хăпарса хваттере лекесси вĕсемшĕн терт пулнă...**

**Паян вара паллă мар ачан кун-кĕнекинчи йĕркесемпе вулакана паллаштарас терĕмĕр.**

## Никам та çывăраймасть: ни атте, ни анне...

«Эвакуацие сивлерĕмĕр. Тăван тăрăха пăрахса ют вырăна каяс темерĕмĕр. Пурнăçĕ вара çав тери йывăр. Апатçимĕç складне сирпĕтнĕрен чун пушшех ыратрĕ. Ĕнтĕ çинĕ-çимен пурăнатпăр. Ырханланакансем куç умĕнчех йышланаççĕ. Эпĕ хам та шăмă купи çеç. Алăсем те авă çип пек çинçе... Чăнах, паянхи кунпа пурăнакан пултăмăр. Ыранхине мар, паянхи кун мĕнле иртессине те татăклăн калама пултараймастăп. Картишĕнчи сарайсене пăсма тытăнчĕ халăх. Хăмисене çĕр чавса пытарчĕç. Кăмака хутма кирлĕ-çке. Ара, капла ирĕкре вырттарсан вăрласа каяççĕ. Пурин те пурăнас килет вĕт-ха.

Сивĕсем пуçланчĕç. Хваттерте тултинчен те сивĕрех ахăртнех. Кантăк çумĕнчи хушăксенчен çил ачисем йăпăр-япăр кĕрсе тухаççĕ пирĕн пата «хăнана». Пÿлĕмри пур-çук ăшша тулалла хăваласа тухаççĕ те: «У-у-у! А-у-у! У-а-а! Мĕн ку-у-у, тата си-и-ивĕрех пула-а-ать а-ак!» – тенĕнех илтĕнет. Эх, тапраннă çил-тăман кĕмен-тухман çурăк хăвармасть. Шăхăрать, нимĕçсене тарăхнă тейĕн. Выçă кашкăртан та хăрушăрах улать. Пирĕн пĕр хутлă чÿречене халь çĕмĕресле юрпа та пăрпа сапать. Никам та çывăраймасть: ни атте, ни анне, ни эпĕ... Кашниех тĕрлĕ шухăшпа аптăранать, асапланать, чунне ыраттарать. Эпĕ хутланса выртнă, хытă чĕтрететейĕн. Анчах шухăшланă чухне вĕçĕхĕррисĕр çеçенхирте юрлă-пăрлă çиле хирĕç пынăнах туйăна-туйăна каять. Ах, кунĕсем сивĕ-çке, хырăмра – пушă.

...Çанталăкăн асар-писерлĕхне пăхмасăр хамăртан 40 çухрăмран вырнаçнă уя кайрăмăр. Юр хырса шăннă çĕре чаврăмăр. 15 килограмм çĕрулми кăларттăмăр вăрттăн. Сыхланмасăр май килмест çав. Уй сыхлавçисен тĕлне лексен киле нимсĕр кайнисĕр пуçне штраф параççĕ. Çапах та пире ăнчĕ, çимелли пулчĕ. Килте вара анне тутлă апат пĕçерсе çитерчĕ.

Каллех уйра эпир. Юр айне пулнă купăста çулçисене пуçтаратпăр. Темиçе кунта çапах та пĕр катка тултартăмăр ăна. Çакă та пирĕншĕн паха апат пулчĕ.

Йывăр чирлерĕм. Ахаль те вăй çукчĕ, пушшех халсăрлантăм. Вырăнпах выртатăп. Пĕр кунхине анне ман ума пĕшкĕнсе:

– Пире ан çухат, эпир йăмăкупа тарăн çырмана каясшăн. Унта пĕр лаша вилсе выртнă тет. Çавăн какайне хам йăтнă таран илсе килесчĕ. Ачам, пурăнас килет-çке, – терĕ те вăйĕ пĕтнĕрен сулăнса кайрĕ.

Аннене хĕрхеннипе чĕре ыратрĕ. Ара, чирлемен пулсан эпĕ те пĕрле пыраттăм вĕт-ха. Халĕ авă çиччĕри Таня йăмăка илсе каять. Вăл, имшерскер, епле çитсе килĕ-ши унта?

Анне хăйпе пĕрле кÿршĕсене чĕннĕ. Анчах лешсем çурма çула çитсен каялла çавăрнă.

– Урăх пулмасть утасси, вăй-хал пĕтрĕ. Темĕн, пире валли какай та юлмĕ çитменнине. Кайса килни те ахаль пулĕ, – тенĕ.

Аннепе йăмăкăм вара малалла утнă. Тарăн çырмана çитнĕ вĕсем. Вилĕ лашана виççĕн ÿтлеме те тытăннă-мĕн. Айккинче вара тата çирĕм çын ытла хайхисене пăхса тăнă. Ара, лешсем вĕсене янавар çывăхне яман-çке. Хайсем çеç ăна пайлама ĕмĕтленнĕ. Çук, ку ÿкерчĕке урăх пăхса тăрайман анне. Пурттине çĕклесе вĕсен еннелле ыткăннă. Хăранăскерсем самантрах айккинелле сирĕлнĕ. Анне валли çапах пыршисем юлнă. Вăл вĕсене миххе чикнĕ те каялла кайма тăнă. Анчах унăн çулне леш çынсем пÿлнĕ. Юратнă çыннăм вĕсене парăнман, ăш-чик тултарнă миххе çатăрласа тытнă, тепĕр аллипе пурттипе сулкаланă.

Çул çинче кана-кана утнă вĕсем. Пĕчĕк йăмăк та хăйне йăттарассишĕн йĕрмĕшме пуçланă. Çапла нушаланануşалана çитнĕ киле. Илсе килнĕ какайпа анне тутлă апат пĕçерчĕ. Шăп çав вăхăтра такам алăка шаккарĕ. Кĕçех пÿрте икĕ арçын аттене сĕтĕрсе кĕчĕ. Хайхискер çул çинче ÿкнĕ. Ура çине тăрас тесе чылайччен нушаланнă. Юрать иртен-çÿрен асăрханă ăна.

## Кушак яшки те тутлă

Ĕнтĕ хамăра лекекен çăкăра иккĕри Вова шăллăма паратпăр. Вăл, пĕчĕкскер, вăрçă мĕн иккенне пĕлмест. Вĕçĕмсĕр çимелли ыйтса йĕрмĕшет. Атте, авă, кунсерен начарланать. Ăс-пуç енчен те улшăнчĕ. Аташкалать. Кашни утăмра çăкăра курать. Уншăн кантăксем те, вырăнсем те, пÿлĕме ăшăтмалли кăмака та – çăкăр.

Инкек çине синкек тенешкел, пыйтă вăйлах ĕрчерĕ пирĕн çинче. Урайĕнчисене хăть таптаса лапчăтатпăр-ха. Пуçрисене вара нимпе те пĕтерейместпĕр. Ўт-пÿ те кĕçĕтет. Хыçкаланса юн кăларса пĕтертĕмĕр. Вова аллисем йăлтах кĕсенленсе-какайланса кайрĕç. Вăрăмланнă чĕрнисемпе пуçне хыçса суранлатнă. Ах, унăн пуçне çума шыв та çук. Çитменнине пÿлĕмре сивĕ.

Анне столовăйне кайса килетĕп терĕ. Вăйран кайнă атте валли мĕн те пулин тупса килесшĕн те. Вăл тухса кайсан йăмăкпа хăма хушăкĕсенчи çăкăр тĕпренчĕкĕсене кăларса çиме тытăнтăмăр. Сасартăк атте хускалчĕ те шăпланчĕ. Пырса пăхрăм, сывлани курăнмарĕ. Вилчĕ... Анне килчĕ. Атте кăкăрĕ çине ÿксе ÿлесе макăрчĕ.

Килтен 12 çухрăм вырнаçнă столовăйне ĕçлеме вырнаçрăм. Кунне 24 çухрăм утасси çав тери йывăр. Выçă пулнăран ялан çăкăр çинчен шухăшлатăп. Ăна питĕ тăраниччен çиес килет. Çапла шартлама сивĕре çÿхе пальтопа, кирза атăпа çула тухатăп. Мĕн тери йывăр! Кашни ир макăратăп. Аннерен уйрăлас килмест. Тăтăш унпа пулас килет.

Пĕр кунхине анне таçтан вилнĕ кушак тупса килчĕ. Унран апат хатĕрлеме пуçăнчĕ.

– Анне, ан пĕçерăна. Пĕрех çиместпĕр. Шел кушака... – хирĕçлерĕмĕр йăмăкпа.

Кĕçех пÿртре тутлă шăршă сарăлчĕ. Çук, мăр-мăра тем пек хĕрхенсен те, сĕтел хушшине кĕрсе лартăмăр. Васкаса яшка çиме тытăнтăмăр...

## Кунне – 125 грамм çăкăр

Ах, пÿртре сивĕ пулнăран алă-ура та çыхланать. Хваттер алăкĕсене те хупса çÿрейми пултăмăр. Эх, вăй пулас пулсан-и? Шалт çеç тĕксе хупăттăм çав йывăр мар алăка. Пĕр каçхине тĕтĕмсĕрĕм шăршине пула вăранса кайрăм. Тĕпел кукринче тем çунать ахăртнех. Йăмăк хăпăл-хапăл кÿршĕсенчен пулăшу ыйтма кайрĕ. Вăл тухса çеç кайрĕ, алăк çилпе шалт! хупăнчĕ те питĕрĕнсе ларчĕ. Тултан шаккама тытăнчĕç, анчах уçаймастăп. Çулăм тĕпелтен явăнса тухрĕ. Анне, пĕчĕк Вовăна йăтнăскер, палăк пек хытса тăчĕ. Ни унталла, ни кунталла утаймасть. Ăçтан вăй тупăнчĕши? Чÿречене чăмăрпа çапса çĕмĕртĕм. Кантăк чăл-пар саланчĕ. Алăран вара юн сăрхăнма та тытăнчĕ. Анне балкон алăкне уçса ячĕ те шăллăма йăтса унта тухрĕ...

Декабрь вĕçĕ. Йывăр, йывăр. Кунне 125 грамм çăкăр çинипе тутă пулаймăн. Хваттерти мĕнпур япалана анне çăкăрпа ылмаштарса пĕтерчĕ. Сĕтел-пукана та кăмакара çунтартăмăр. Çак вăхăтра маншăн чи кулянмалли – анне кунсерен йăшса пыни. Эпир те имшеркке-ха, вăл тата начар...

– Эх, вăрçа тухса кайнă ывăлăма урăх кураймастăп ахăртнех... Чун тухассине хамах пĕлетĕп. Ачамсем, ĕнтĕ мансăр мĕнле пурăнăр-ши? Ах... – терĕ пĕр кунхине.

Чĕре пĕçерсе кайрĕ. Çук, аннерен уйрăлас килмест манăн. Нихăçан та. Ăна ыталаса илтĕм, тем пек макăрас килсен те куççуль тухмасть иккен. Вăл тахçанах типнĕ пирĕн, вăрçă ачисен.

Юратнă çыннăм чирленине кура ĕçрен те хыпаланса таврăнма тытăнтăм. «Хыпаланса» тени сăмахĕ çеç паллах. Чупма мар, утма та йывăр. Çил-тăманра ÿсĕр çын пек тайкаланатăп. Ўкетĕп, аран йăраланса тăратăп та малалла ăнтăлатăп. Ах, аннене пурăнтарас килет. Анчах нимĕнпе те пулăшма пултараймастăп, чун ыратать. Тÿсмелле мар.

Столовăйĕнче алла кастартăм. Юн нумай юхрĕ. Вăйран кайнăран путвала анса выртрăм. Виçĕ куна ăша пĕр тĕпренчĕк ямасăр irttertĕm. Ў т-пÿ шыçăннине туйя пуçларăм. Тăваттăмĕш кунне пĕтĕм вăйя пухса ура çине тăтăм. Çинçешке урасенчен такăна-такăна килелле танкăшрăм. Ах, йывăр утма, йывăр. Вăрçăччен хаваслăччĕ пурнăç. Кун пек çул тăрăх эпир туссемпе çилтен хăвăрт чупаттăмăр. Пĕр-пĕрне тытмалла та выляттăмăр. Çав вăхăтсене ăмсанса çеç аса илмеллине ăнланса илтĕм тинех. Тĕллĕн-тĕллĕн пуç çаврăнать, куç хуралса килет. Аннене, аннене курас килет... Пĕчĕк шăллăмпа йăмăкшăн та тунсăхларăм. Киле упаленсе çитрĕм темелле. Картлашка патĕнче чылайччен кантăм. Ара, ун тăрăх çÿлелле хăпарасси пирĕншĕн чĕр нуша-çке. Чĕркуççисене, алăсене ыраттарса çитрĕмех хваттере. Вырăн çинче анне хускалми выртнине курсан, унăн чунĕ тухнине ăнланса илтĕм. Акă шăллăм ун çумне кĕрсе выртрĕ, хыттăн ыталарĕ те кăкăрĕ çумне тĕршĕнчĕ... Кÿршĕсем пулăшнипе аннене утиялпа чĕркерĕмĕр те урама илсе тухрăмăр. Йывăç çумне хурса хăвартăмăр. Ăна масара илсе кайма никамăн та вăйхал çукки кулянтарчĕ паллах. Анчах ним тума та çук. Чавса çывăх та, çыртма çук тенешкелех пулчĕ.

Виççĕ тултарайман Вовăна интерната илсе кайрĕç. Килте йăмăкпа иккĕнех юлтăмăр. Вĕрсе хăпартнă евĕр шыçăнтăмăр тата. «Ачамсем, сирĕнтен пурăнасси пулмасть пуль капла», – терĕ пĕр кунхине кÿршĕ арçынни. Унăн сăмахĕсем шиклентермерĕç. Мĕншĕн тесен вилĕм çывхарнине питĕ лайăх чухлатăп. Йăмăкăма çеç шеллетĕп. Вăл, ман чухлĕ те пурăнса кураймарĕ вĕт. Эпĕ хăть çак çĕр çинче 13 çул пурăнтăм, вăл вара çиччĕ çеç. Уйрăмлăхĕ пысăк вĕт.

Пире эвакуацилерĕç. Кайран Чулхулана тăвансем патне леçрĕç...»

***Элиза ВАЛАНС хатĕрленĕ.***

# Сăвăпа чĕрем юрлать

*Сывă-и, хисеплĕ «Тантăш» хаçат ĕçченĕсем!*

*Эпир, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Хуракасси шкулĕнче вĕренекенсем, сире салам яратпăр. Пирĕн шкулта 1998 çултанпа кĕçĕн классен «Шевле» хаçачĕ тухса тăрать. Ачасем унта хаваспах тĕрлĕрен статья, сăвă шăрçалаççĕ, класри хыпарсене пĕлтерсех тăраççĕ. Хаçат ертӳçи – Надежда Серафимовна Максимова, аслă вожатăй. Кĕçĕн класра вĕренекенсем шкул пурнăçне питĕ хастар хутшăнаççĕ. Кăçал та кайăксем валли тăрăшсах сырăшсем ăсталарĕç. Çак пархатарлă ĕçе тума вĕсене ашшĕсем пулăшрĕç. Маттур ачасем сăвă та хайларĕç.*

*Сире хамăрăн хăш-пĕр ĕçе ярса парас терĕмĕр.*



## Савăнăç

Ӳкрĕ шурă юр,
Çитрĕ хĕл иккен.
Хĕл Мучи те, кур,
Чĕпĕтет питрен.
Ачасем выляççĕ
Урамра юрпа.
Çунапа яр/ă/наççĕ
Чунтан савăнса.

***Артем ИЛЬИН,***
***3-мĕш класс.***

## Кайăк тусĕсем

Акă килчĕç сив кунсем,
Юр айĕнче йывăçсем.
Кайăксем те выçса çитрĕç,
Ялалла вĕсем çул тытрĕç.

Ачасем тусĕсене
Чунтанах хĕрхенчĕç.



⊙ ***Мария ВАСИЛЬЕВА** (Çĕрпӳ районĕ, Çĕрпӳри 2-мĕш шкул) **ӳкерчĕкĕ.***

Кашни кун сырăшсене
Кучченеçлентерчĕç.

Кĕçех çитĕ çуркунне,
Ăшăтĕ çанталăк.
Кайăксен парни пире –
Юрă – чĕрĕ палăк.

***Эльза ТРОФИМОВА,***
***2-мĕш класс.***

## Кăпăш юр

Мамăк евĕр кăпăш юр –
Иртенпех вăл тăкăнать.
Шап-шурах хупланнă уй,
Шурă тинĕс пек курнать.

***Оля КУЗНЕЦОВА,***
***3-мĕш класс.***

***

Çитрĕ сив хĕл васкаса,
Çурĕ шур юр кăпăшка.
Ачи-пăчи савăнса
Илсе тухрĕ çунашка.

***Арина НИКИТИНА,***
***3-мĕш класс.***

## Сивĕре

Тулта сивĕ пулнипе
Юрамасть кайма шкула.
Пит ярăнас килнипе
Тухрĕ шăллăм урама.

Сив мучийĕ чĕпĕтет
Питĕнчен те сăмсинчен,
Ун алсишĕ йĕпенет
Юрпа перкеленĕрен.

Пӳрнепе ăна юнарăм,
Пӳртелле кĕме васкатрăм:
– Çитĕ сана ашкăнса,
Кĕнеке вула ларса.

***Мария ПЕТРОВА,***
***2-мĕш класс.***



⊙ ***Павел ИВАНОВ** (Шупашкар, 24-мĕш шкул) **ӳкерчĕкĕ.***

## Каникул

Ак каникул та умра,
Савăнатпăр урамра:
Çунашкапа ярăнатпăр,
Йĕлме йĕлтĕрпе чупатпăр,
Кампурпа та туссемпе
Эх, вылятпăр кунĕпе!
Пит аван каникулта,
Манăн чунăм хĕпĕртет,
Анчах пурпĕр шкулалла
Темшĕн пит каяс килет.
Хамăн шкулти туссене
Çав тери курас килет.

## Хĕл сывхарчĕ

Хĕл çывхарчĕ васкаса,
Шур юр çăвать ташласа.
Ак тухатпăр урама
Юр кĕлеткесем тума!

***Аделия ИВАНОВА,***
***2-мĕш класс.***

Канаш районĕ,
Катек шкулĕ.

## Кĕлчечек

Кĕлчечек! Кĕлчечек!
Вăл хитре, юмахри пек.
Кĕпи хутлă-хутлă, кур,
Хӳтĕленме йĕппи пур.

## Дымка

Дымка ятлă тусăм пур.
Юр юрлать вăл: мăр! та мăр!
Ăшă вырăн юратать,
Кунĕн-çĕрĕн çывăрать.

***Кристина НИКОЛАЕВА,***
***5-мĕш класс.***

## Юр кĕлетке

Эпĕ тухрăм урама
Юр кĕлетке пуçтарма.
Пуçĕнче – кивĕ чугун,
Çăварпа куççем – вак чул.
Сăмси кишĕр пулчĕ ун.
Кĕлеткен те пур-мĕн чун:
Вăрăм турат аллинче,
Сулкалать енчен енне.

***Олеся МАКАРОВА,***
***5-мĕш класс.***

Шăмăршă районĕ,
Палтиел шкулĕ.



⊙ ***Дима НИКОЛАЕВ** (Красноармейски районĕ, Красноармейскинчи ача-пăча искусствисен шкулĕ) **ӳкерчĕкĕ.***

*Альбина ИСЕМПИ*

# Пĕчĕк учитель

Тахçантанпах канăç памасть пĕр шухăш Кронида. Хĕрĕх урлă каçнă пулин те акăлчан чĕлхине вĕренесси пуçран тухмасть унăн.

Пĕрле выляса ӳснĕ, пĕр парта хушшинче ăс пухнă юлташĕпе тĕл пулмассерен ăмсану туйăмĕ асаплантарать ăна. Ильяс, Хусанти педагогика институтĕнчи ют чĕлхе факультетĕнчен вĕренсе тухнăскер, акăлчанла шыв юххи пек шăкăртаттарать. Куçаруçă. Тăван чĕлхепе калаçма та нихăçан именсе тăмасть. Тутарла тĕшмĕртет. Турă паниех пулĕ ку унăн.

Шкул сакки çинче чухнех килĕштерчĕç туссем нимĕç чĕлхине, ăмăртмалла алă çĕклетчĕç урокра. Паян вара аслă пĕлӳллĕ Кронид, тĕп инженер, хăйĕн тусĕ Ильяс тепре килнĕ çĕре акăлчанла калаçма вĕренме çирĕп тĕллев лартрĕ. Уншăн пĕтĕм пушă вăхăтне, вăй-халне шеллемĕ. Пулăшса пыраканĕ ывăлĕ пулĕ.

Эльдар, садикрех акăлчан чĕлхи вĕреннĕскер, шкулта аван ĕлкĕрсе пырать. Кассетăсемпе те анлă усă курать. Ашшĕшĕн "учитель" пулма хаваспах килĕшрĕ пиллĕкмĕш класа çӳрекенскер.

– Юрĕ, – терĕ Эльдар кĕскен, шкапран вĕренӳ кĕнекине йăпăр-япăр туртса кăларчĕ те алфавит тĕлне уçрĕ. – Малтан сас паллисемпе, вĕсене мĕнле каламаллипе паллашăпăр. Унсăрăн вулама вĕренейместĕн, – тимлĕн ăнлантарчĕ вăл. Унтан çамрăк вĕрентекен вуларĕ, магнитофон итлеттерчĕ. Чĕлхене мĕнле, ăçта перĕнтермеллине кăтартрĕ. Вĕренӳ дисциплини çирĕп пуласси малтанах сисĕнчĕ.

Уроксене вун тăхăр сехетре пуçлама, вун пилĕкшер минутлă тăхтавсем тума калаçса татăлчĕç ашшĕпе ывăлĕ. Будильник шăнкăравĕн сасси, вĕсен канса илмеллине пĕлтерчĕ.

Вăхăта сая ямасăр Эльдар пикенсех тетрадь çине кăранташпа тӳрĕ йĕр туртрĕ. Шкулти пекех, ашшĕ валли – дневник, хăй валли журнал хатĕрлерĕ.

Эльдар Кронидович чăннипех канăçне çухатрĕ. Урок хатĕрлет те хăйĕн "вĕренекенне" кĕтсе кускалама пуçлать. Кусĕ сехет çинчен каймасть. Шăнкăрав янăрасан апат çинĕ çĕртен сиксе тăрса алăк уçма васкать.

– Мĕнле вĕренекен пулчĕ ку? Пĕрмай кая юлать. "Иккĕ" лартса паратăп-ха акă...

Вăхăтра çитейменнишĕн каçару ыйтса ашшĕ пашкаса кĕрет. Мĕн туса ĕлкĕрмелле? Хырăм та выçă. Умне алфавит хурса сыпма тиврĕ вĕри яшкана.

Малтанхи утăмсем йывăр. Йăнăш хыççăн йăнăш. Апла пулин те çине тăрсах малалла талпăнчĕç ашшĕпе ывăлĕ.

Вун иккĕ таран шутласси алфавит вĕренессинчен кая мар пăшăхтарчĕ. "Иккĕ" хыççăн "иккĕ" вырнаçрĕ дневника. Пĕçерккĕ те самаях лекрĕ аслине. Хăш-пĕр чухне, кулăшла самант килсе тухсан, çамрăк вĕрентекен:

– Пĕтрĕм иккен тинех! Тытăр мана, – текелесе, вăйсăрланнă евĕр, урисене лĕнчĕр ярса урайне тĕшĕрĕлет, варне тытса кулать.

Сăмах хутаççи тулсах пычĕ. Майĕпен кĕске диалогсем тума хăнăхрĕç хайхискерсем. Ир-каç пĕрпĕрне акăлчанла сывлăх сунчĕç. Ашшĕ тĕлĕкре те ют сăмахсемпе перкелешме тытăнчĕ.

Паян вара дневникра пĕрремĕш "тăваттă" курăнчĕ.

"Тар юхтарни ахаль мар иккен. Тен, "пиллĕк" те лартса парĕ-ха кăштахран", – шухăшларĕ савăнăçне пытармасăр ашшĕ. Хĕрлĕпе çырнă асăрхаттарусем аякранах курăнаççĕ: "Урокра ан çывăр", "Кая юлса ан çӳре", "Апат çинчен мар, урок пирки шухăшла".

Малаллахи уроксенче Эльдар Кронидович "вĕренекен" çĕнĕ сăмахсене мĕнле астуса юлнине тĕрĕслерĕ. Диалог тума ыйтрĕ, хăй дневник çине "пиллĕк" çавăрса хучĕ. Пĕрремĕш "пиллĕк" савăнтармаллипех савăнтарчĕ çитĕннĕ çынна! Ыталаса илчĕ те ывăлне маччаналла çĕклерĕ.

Урок вĕçленнине систерсе будильник сасă пачĕ. Пĕрле хĕпĕртет тейĕн!

– Ильяс тусăм тепре килнĕ тĕле калаçма çеç мар, шăкăртаттарса вулама та вĕрентĕ-ха мана юратнă ывăлăм, – хаваланчĕ ашшĕ. – Эпĕ вара тусăма çуралнă кунĕ ячĕпе акăлчанла саламлăп...

Хирте апат тутлă теççĕ




# Сăмахкаçмăшсем




**Сылтăмалла:** 1. Тўпери «йĕп вăрри». 3. Вăл партин шанчăклă юлташĕ пулнă. 5. Офицер тивĕçлĕ канăва тухни. 8. Чăваш сăвăçи. 10. Наянлăх. 11. Вырăс çыравçи, юморист. 12. Кĕлетке пайĕ. 14. Уншăн-куншăн сасăлама хистесе çўрекен. 16. Казахстан çĕршывĕн тĕп хули. 17. Унта чурасем пилĕк аваççĕ. 18. Шалча пек вăрăмскер. 19. АПШри штат.

**Аялалла:** 1. Уçлăха вĕçнĕ малтанхи карапсен ячĕ. 2. Килĕшўлĕх. 3. Унта Эльбруспа Казбек мăнаçланса лараççĕ. 4. Ракетăран уçлăха тухнă пĕрремĕш космонавт. 6. Ĕмĕт пурнăçланни. 7. Тĕнчери чи пысăк стадион. 8. Мăнкăмăллă кайăк. 9. Çурçĕрти пулă. 12. Украинăри сăрт-ту. 13. Тем те пултаракан маçтăр. 14. Вăл Байкалтан юхса тухать. 15. Авалхи Египет фараонĕ.

**Ăнлантарни:** Ыйту хуравĕсене тĕрĕс тупсассăн, палăртнă тăваткăлсенче авторăн хушаматне пĕлме пулать.

**Сылтăмалла:** 3. Пушхирти тĕмĕ. 4. Çар званийĕ. 9. Водород бомбин «ашшĕ». 10. Ораттори евĕрлĕскер. 13. Авалхи грексен тухтăрĕ. 14. Пĕр-пĕр хуçалăх пшик! тăрса юлни. 15. Роу режиссер лартнă юмах. 16. «… рута» /юрăран/.

**Аялалла:** 1. Лапша тăванĕ. 2. Кукаçин мăшăрĕ. 5. Çар çынни. 6. Шкул ачисен савăнăçĕ. 7. Динамика мар. 8. Унта спорт вăййисем ирттереççĕ. 11. Вăл тўпере вĕçет. 12. Çăкăрлă хула /киноран/.



**Сылтăмалла:** 3. Тапăну. 6. Чĕлхе çав хулана та çитерет. 7. Пĕвери «юрăç». 8. Аквариумри пулă. 9. Вăл ППЭ вăхăтĕнче пухăнать. 11. Ўссе çитеймен вăрман. 14. Украина актерĕ, Тарас Бульба рольне калăпланăскер. 15. Çĕр кăпкалатмалли хатĕр. 17. Юрă-… 20. … Отто фон Штирлиц. 22. Çурхи яшка курăкĕ. 23. Швецин чапа тухнă юрă ушкăнĕ. 24. Вăл кино пуçламăшĕнче е вĕçĕнче курăнать. 25. Африкăри çĕршыв.

**Аялалла:** 1. Африкăри пушхир. 2. Сирпĕнекен снаряд. 3. Ĕлĕк. 4. Кутăн выльăх. 5. Унран аслă пулма хушман. 9. Пылак çĕрулми. 10. Хурт-кăпшанкă. 12. Кĕрхи чечек. 13. Кавказри юханшыв. 16. Типĕтнĕ абрикос. 18. Вăтам Азири урапа. 19. Вăрманти вĕçенкайăк. 20. Вăрăмăш виçи. 21. Осетр «тăванĕ».





**Сылтăмалла:** 5. Ăна балкон айĕнче шăрантараççĕ. 6. Кĕвĕ терминĕ. 8. Ссуда илнĕ çынсен укçине тăпăлтаракан. 11. Тахçан вăл Хрущевпа пĕрле ĕçленĕ. 13. Ун çинчен лекторсем тухса калаçаççĕ. 14. Тапса ярăнмалли «велосипед». 15. Ун аллинче рапира пур. 18. Ĕлĕкрен. 20. Архитектура пайĕ. 21. Платникĕн ĕç хатĕрĕ. 22. Ăна хăй тĕллĕн вĕреннĕ артистсем лартса ирттереççĕ. 23. Ĕлĕк вăл командирпа юнашар тăнă. 24. Раççей президенчĕ пулма хăтланнă çын.

**Аялалла:** 1. Пăравус хыççăн кăларма тытăннă транспорт. 2. Тĕнчипе паллă баскетболист – Арвидас … 3. Хĕç-пăшал. 4. Техникăна шăнасран пулăшакан шĕвек. 7. Казахстанри хула. 9. Ăсчах. 10. Телекурав çурчĕ. 12. Осетире сарăлнă хушамат. 13. Венгри композиторĕ – Имре … 16. Ăна пухура çырса пыраççĕ. 17. Чăвашри вырăс çыравçи. 18. Çĕпĕрти хула. 19. Ĕçмелли шĕвек.




**Сылтăмалла:** 4. А. Фадеев калăпланă роман. 6. Опера тексчĕ. 7. Çамрăк гвардеец. 9. Тĕнчипе паллă хоккеист, «Спартак» командăра вылянă. 12. Кĕнеке çивитти. 13. АПШри штат. 16. Тĕнчери чи пысăк стадион. 19. Кĕнеке хуплашки валли хатĕрленĕ ятарлă материал. 20. Геологи терминĕ. 21. Чăваш çыравçи, Эверккель Ваççин чăн хушамачĕ. 22. Порт çывăхĕнчи шыв лаптăкĕ. 23. Ăна П. Пиккасо ўкернĕ.

**Аялалла:** 1. Вăрçă вăхăтĕнче вăл фашистсемпе çапăçнă. 2. Паттăрсене халалласа лартнă палăк. 3. Вăрă-хурах ĕçĕ. 5. Ăна хыр сухăрĕнчен хатĕрлеççĕ. 8. Кукаçипе … 9. Пушă. 10. Юмахри карчăкăн пуянлăхĕ. 11. Вăл Старшиновпа пĕрле вылянă. 14. Шыв айĕнче ишмелли хатĕр. 15. Каферен те пысăк. 17. Пĕр-пĕр предприятин пурлăхне илсе тăракан. 18. Перу çĕршывĕнчи хитре мар янăракан кўлĕ.

***Николай КРАСНОВ*** (Йĕпреç районĕ) ***хатĕрленĕ.***